# ХИТРЕ

## (Чăваш юррисене сăнанисем)

Хитрене чăваш пит̆ӗ юратать. Çавăнпа чăваш юррисенче хитре çинчен нумай каласа юрланă.

Мĕн хитре?

Хитре вăрман — çĕмĕрт çурăлнă чух, хурăн çулçи сарăлнă чух; хитре пахча — унта мăкăньсем тата ытти чечексем шăтнă чух; хитре хир, уй — унта симĕс курăк шăтнă чух; хитре тĕнче — ăна хĕвел пăхса çутатнă чух; хитре урам — урамра ача-пăча выляса çӳренĕ чух. Çавăнпа та юрлаççĕ:

Хурăн çулçи çурăлсан,
Килет вăрман илемĕ,
Хурăн çулçи тăкăнсан,
Каять вăрман илемĕ;

Мăкăнь çеçки çурăлсан,
Килет пахча илемĕ,
Мăкăнь çеçки тăкăнсан,
Каять пахча илемĕ;

Хирти курăк ешерсен,
Килет хирĕн илемĕ,
Хирти курăк типсессĕн,
Каять хирĕн илемĕ;

Хĕвел хĕрсе тухнă чух
Килет тĕнче илемĕ,
Хĕвел анса ларсассăн,
Каять тĕнче илемĕ;

Хĕрсем вăййа тухсассăн,
Килет урам илемĕ,
Хĕрсем вăйăран кĕрсессĕн,
Каять урам илемĕ...

Ун пек чух епле урамра хитре пулас мар? Хӗрӗсем те çӳлти çăлтăр пек, ачисем те Питӗр ачисем пек, хитререн те хитре, шеремет:

Чăн тӳпере çич çăлтăр та,
Çиччӗшӗ те çут çăлтăр;
Пирӗн урамра çитмӗл хӗр те,
Çитмӗлӗш те çут çăлтăр.

Кăвак чечек тăррисем те —
Вӗт улача тӗррисем;
Ай-хай пирӗн юлташсем те —
Питӗрпурӗн пикисем.

Мӗнле çынна чăваш хитре тесе шухăшлать?

Юрăра хисеплеççӗ: çӳлӗ çынна, тӳрӗ, сарлака кӗлеткене, вăйлă çынна, çирӗп кăкăрлă, çутă сăнлă, тулли питлӗ, таса уçă саслă, çăмăл уралла çынна. Хитре хӗрсем яштак пулмалла, вӗсен пӗвӗ Атăл хăви пек яштак, сасси хур кайăк сасси пек пулмалла. Акă мӗн тесе каланă юрăра:

Савни анать шыв хӗрне,
Сассипеле юрласа;
Сасси акăш сасси пек;
Пӗвӗ Атăл хăви пек.

Е хитре хӗрӗн пӗвӗ шыв хӗрринчи хăмăш пек пулас пулать: тӳрӗ, яштак, çинçе пилӗклӗ:

Савни анать шыв хӗрне,
Хăй сассине янратса,
Сасси шăпчăк сасси пек,
Пӗвӗ хăмăш пӗвӗ пек.

Епле-ха? Хитре мар-и? Сасси шăпчăк сасси пек, тет. Тата яштак пӳ, хитре кӗлетке нимрен паха япала вара. Чăваш калать: лаша пуласси тихаран паллă, тет. Çавнашкал юрăра та хитре кӗлеткеллӗ хӗрсене ачаранах сăнаççӗ:

Хӗвел питӗнчи курăка
Юр айӗнчен куç курать,
Хитре яштак хӗрсене
Çамрăкранпах куç курать.

Хӗрсем те ку ырлăха хăйсемех сисеççӗ, шереметсем, ахальтен-и вӗсем саркайăк пек саркаланса çӳреççӗ:

Кантăксене уçса ярса
Камшăн кӗпе касатăр?
Яштак пӳпе, чакăр куçпа
Кам телейшӗн ӳсетӗр?

Хитре тĕслĕрен. Сарри те хитре, хури те хитре. Пантюркла хитре акă çакă пулать: кĕлетке яштак, пилĕк çинçе, пит çăмартисем тулли, çавракa, сăн çутă та хĕрлĕ, çӳç вăрăм, куç хура та пысăк, сас çирĕп, уçă, утти хăвăрт, çăмăл. Пăхăр-ха, мĕн тенĕ:

Атьăр, хĕрсем, утар-и?
Утар çĕрне ситер-и?
— Утар çĕрĕнче мĕскер пур?
Икĕ каччă пур, теççĕ.
— Икĕ каччă мĕн ыйтать?
Икĕ сарă хĕр ыйтать,
Куçĕ хура пултăр, тет,
Пилĕк çинçе пултăр, тет.
Утти çăмăл пултăр, тет,
Çӳçĕ вăрăм пултăр, тет.

Пуринчен те ытла хитререх — тулли питлĕ сарă хĕр. Ăна вара никам та çитеймест:

Ачăлташпа мачăлташ,—
Пирĕн пахчара пулать вăл,
Тулли питлĕ сарă хĕр,
Пирĕн ялта пулать вăл.

Çӳлте çăлтăр пит нумай,
Çап-çуттийĕ пĕрре çех,
Ялта хĕрсем пит нумай,
Хĕрлĕ питли пĕрре çех.

Акă тата Элшел хĕрĕсем епле çăмăллăн утса çӳреççĕ. Кăвакал пек икĕ аяккалла тайкаланса утни вара ниме те тăмасть, ăна пилĕкне тытма пĕлмен хĕрсем е аптранă арăмсем анчах йăваланса утаççĕ, хĕр тесен акă çапла утать:

Аслă çултан такăр кам,
Урапа йĕрри палăрмасть?
Элшел хĕрĕнчен сатур кам,
Сиксе утни палăрмасть?

Хитре хĕрсем, авалхи шутпа, тухья тăхăнмалла, мăя шăрçа, çуха çыхмалла, çурăм çине утма ямалла, ума — шӳлкеме, тенкĕ:

И ту чипер, ту чипер,
Ту аякки çул чипер;
Вылямашкăн, кулмашкăн
Тухья пуçлă хĕр чипер.

Хура вăрмана илем кĕмест,—
Çĕмĕрт чечеке лармасан,

Çамрăк хĕрсене илем кĕмест,—
Кĕмĕл тенкĕне çакмасан.

Кĕмĕле халь нумаях çакмаççĕ. Кĕмĕл çакасси вăл авалтанах пулнă. Хальхи вăхăтра пуян çын улпутла тумланать. Авалхи чăвашсен пуянни те, начарри те пĕр килти пиртен тунă çи-пуçпах çырлахнă. Çавăнпа пуянĕсем начартан уйрăм пуласшăн мулĕсене ума çакса çÿреме тытăннă. Мĕн чухлĕ хĕр пуянрах, ун чухлĕ унăн кĕмĕл те нумайрах. (Марксистсем çав йĕркене «пафос расстояния» теççĕ).

Чăваш юррисенче хитрепе юнашар усал çинчен те пур. Усалтан юрăра мăшкăлласа кулни питĕ нумай. Анчах суран пулса, чирлесе усалланнă çынтан чăваш кулмасть. Çын — хăйне хăй хитре вырăнне хурса мухтанать пулсан, чи усал шутланать. Вара ун пеккисене чăваш хĕрхенмест:

Ут усалли — ула ут,
Пулă усалли — уланкă.
Хĕр усалли — хура хĕр,
Ытла усалли — чăсланкă.

Чăсланкă хĕрсем çирĕп кĕлеткеллĕ мар, çемçешке, ĕçре час ывăнаççĕ, качча кайсан ача çăмăл тăваймаççĕ, час ватăлаççĕ, çавăнпа чăсланкă хĕре каччăсем юратмаççĕ. Хаяр, кутăн хĕрсене пушшех юратмаççĕ:

Хăяр çулçи хăях пек,
Хăярĕсем хăйра пек;
Хĕрĕ пăхма хĕвел пек,
Ăшĕ-чикки — хура юн.

Улпут майрисем пек пите-куçа сăрласа хитреленни чăваша кăмăла каймасть:

Чĕн пиçихи çыхатăр,—
Пилĕк çинçе, тиетĕр:
Питĕре писев сĕретĕр,—
Эпир чипер, тиетĕр.

Пĕчĕк пÿ хитрене чăрмантарать те, çавах ăна тиркесех каймаççĕ, мухтама та мухтамаççĕ.

Хÿра пурçăн пиççихи,
Çÿçи кĕске, мĕн тăвас?
Манăн савни пĕчĕкçĕ,
Манăн ăна мĕн тăвас?

Пĕчĕккĕ пулсан та сиен çук, юратма чăрмантармасть, арçын мар — арçынна пĕчĕкки килĕшмест. Пысăксăр

пуçне арçыннăн вăйлă пулас пулать, пули-пулми çынна парăнас пулмасть, хăйĕн чысне хытă тимлес пулать. Паттăр арçынна: вăл кашкăр пек, теççĕ, е — вăл кашкăртан та хăрамасть, теççĕ, е тата — вăл кашкăра та пăвса вĕлерĕ, теççĕ. Кашкăр пирĕн таврара — чăн вăйлă, чăн хитре, чăн мăнкăмăллă, аслă, хаяр тискер кайăк. Тилĕ — чее, хăравçăрах. Çавăнпа чее, вăйсăр çынсене: вăл тилĕ теççĕ. Упа вăйлă та ухмахрах. Упа вăл çавăрнăçуллă мар, упа хитре те мар. Упа пек мăнтăр, вăйлă, ухмахрах çынсенчен «тилĕреххисем» мăшкăллаççĕ, упа пеккисене вĕсене хисепе те картмаççĕ. Кашкăр пекки — курнăçуллă, вăл вара хĕрсен чунне çунтарать.

Акă ĕнтĕ урам тăрăх йĕкĕт—каччă иртсе пырать: урисене ярт-ярт ярса пусать, аллисене вăйлăн суллать, кĕлетки кăшт кăна хумханать, куçĕпе малалла тӳрĕ пăхса утать. Каччăна чӳречерен сар хĕр пăхать. Вара, каччă иртсе кайсан, сар хĕр шухăша каять. Аса илет: пĕрре тырă вырнă чух кашкăр курнăччĕ. Тырă выракан çынсем пуртăсем, рычаксем йăтса кашкăра хăвалама тытăнчĕç. Кашкăрĕ çынсем çинелле сивĕ куçĕпе çаврăнса пăхрĕ те шăлĕсемпе шак-шак шартлаттарчĕ. Вара пĕртте васкамасăр вăрманалла йывăррăн юртса кĕрсе кайрĕ. Çынĕсем вара вăрмана кĕме хăрарĕç. Çавă кашкăр пекех мар-ши пирĕн каччă та?

Сăрт хĕррипе кашкăр пырать,
Хӳри вĕçне сулласа;
Урампала йĕкĕт пырать,
Ик аллине сулласа.

Юлашкинчен хурапала сарă çинчен каласăпăр. Темшĕн: юрăра хитрене сарă теççĕ, хитре мара — хура теççĕ. Анчах сарă çӳçлĕ çын та тепри хитре мар, тепри пур — хура çӳçли те ытармалла мар хитре. Çавăнпа хура тени — шухăшласа каланă сăмах, сарă та çавнашкалах. Кам хура? — Кам ĕçлет, тарпа касăлать, тăпрапа пиçет — вăл хура. Кам сарă? — Кам ĕçлемест, тутлă апат çиет, ӳтне-тирне мăнтăрпа çемçетет. Çавăнпа пире «хура халăх» тенĕ, ĕçлемен улпутсене «шурă шăм» тенĕ.

Ĕçлеме, тарлама питех никамăн та чун туртмасть. Канлĕ, ĕçлемесĕр пурăнма пурте юратаççĕ. Çавăнпа сарă пуриншĕн те пулас килет, мĕншĕн тесен вăл канлĕ пурнăçран килет. Хура — никамăн та пулас килмест, мĕншĕн тесен вăл çитмен пурнăçран килет. Хурапа сарăна диалектика çĕççипе хырса пăхсан çавăн пек туйăнать.

Чăваш юррисенче сарă тени çав хитрене палăртать.

1923